теле 9
прогр

ШУХĂШЛАМАСĂРАХ КИЛЁШНЁ

10-мĕш стр.

www.tavan-en.ru

Шупашкар

Таван Ен

Хакё ирĕклё

№ 1 (1-2) 10113-10114 ЯНВАРЬ, 11-17 2013 ЭРНЕ КУНСЕРЕН ТУХАТЬ

Хаçат 1932-мĕш çулхи июлĕн 27-мĕшĕнче тухма пуçланă

Артист та, режиссер та Илем тĕнчи

3-мĕш стр.

РЕСПУБЛИКĂРА

2013 çулăн 1-мĕш кунĕнче Чăваш Енре 10 ача çуралнă: 6 арçын ача тата 4 хĕрача. Пĕтĕмĕшле январĕн 1-8-мĕшĕсенче республикăра 334 ача çут тĕнчене килнĕ. Кăçал амăшĕн капиталĕ 408 пин те 960 тенкĕ пулĕ.

Пĕлтĕр республикăра 17521 пепке çуралнă, 2011 çулхинчен 1356 ача нумайрах.

Январĕн 7-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи Татьяна Соборĕнче Раштав уявне халалласа кĕлĕ тунă. Ăна Чăваш тата Шупашкар митрополичĕ Варнава ирттернĕ.

Литургире Чăваш Республикин культура, национальноç тата архив ĕçĕсен министрĕ Вадим Ефимов пулнă. Кĕлĕ хыçăн министр тата митрополит тĕн темипе тата çынсен кăмăл-сипет пуянлăхне ӳстерес тĕллевпе йĕркелекен мероприятисене ирттерессипе çыхăннă ыйтусем хускатнă.

Шупашкарти экономикăпа технологи колледжĕнче пĕлӳ пухакан Ирина Кутузова Чăваш Ене çĕнтерӳпе тавраннă. Хĕр Мускаври «Содружество» спорт Керменĕнче армспорт енĕпе Раççей шайĕнчи турнирта (55 килограмлă виçе категорийĕнче) ылтăн медале тивĕçнĕ, спорт мастерĕн нормативне пурнăçланă. Турнира çĕршыври 22 регионтан 99 спортсмен хутшăннă. Чăваш Ен команди пĕтĕмĕшле 69 очко пухса 2-мĕш вырăна тивĕçнĕ.

ЦИФРАСЕН ЧĔЛХИПЕ

Республикăра январĕн 1-8-мĕшĕсенче пурĕ

4,5 пин

спорт сооруженийĕ ĕçленĕ.

ÇИТЕС НОМЕРСЕНЧЕ ВУЛĂР Таван Ен

«Афганистан – манăçми суран»

Пурнăç çине урăхларах пăхаççĕ

«Ачаш папоротник»

Вăрмана аса илтерет

УЯВ

Гусарпа чăваш пики – Кремльти елкăра

Кӳкеçри «Колосок» ача садне çӳрекен пиллĕкри Арсений Удаловпа Александра Егоровăшăн кăçалхи Çĕнĕ Çул ĕмĕрех асра юлĕ. Декабрĕн 31-мĕшĕнче вĕсем Мускаври Кремль Керменĕнче иртнĕ уява хутшăнма пултарчĕç.

Юмахри пек асамлă, тĕлĕнсе каймалла капăр уяв ытамĕнче пулни нихăçан манăçмĕ...

Пиллĕкри Арсений миçемĕш кун ĕнтĕ аслашшĕпе асламăшне тата садикри тусĕсене хăй Кремльти елкăра мĕн курни çинчен каласа парать, çаплах каласа пĕтереймест. «Хĕл Мучи кучченеç пачĕ-и?» – тесе ыйтсан вăл шухăшласа тăчĕ те çапла хуравларĕ: «Ачасем Мускава нумаййăн пухăннă елкăна, пĕтĕм çĕршывран. Хĕл Мучи пурин валли те парне пуçтарса килеймен. Вăл пире билетсем пачĕ, эпир унпа парнесем кайса илтĕмĕр. Мускавра чăнчăн Хĕл Мучи пурăнать иккен, урине те вăл пас тытнă çăм атă тăхăннă. Анне, пирĕн садике вара Хĕл Мучи пушмак тăхăнса килнĕччĕ... Вăл чăн-чăнни пулмарĕ пуль? – тĕлĕнсе каласать пĕчĕк Арсений. – Мускаври чăрăш мĕн пысăкăш! Ун пек çуллине тата хитрине халиччен курман. Икĕ клоун пирĕнпе вылярĕç. Ха-ха!.. Ĕнесене Мускавра канфет çитереççĕ иккен... Ĕни вара çиесшĕн мар, мĕкĕрет, çилленет. Клоун манран ĕне мĕн çиме юратать тесе ыйтрĕ те: «Пирĕн патăрта курăк, утă çитереççĕ», – терĕм».

Эпир Александра Егоровăпа тĕл пултăмăр. Хĕрача уяв пирки хавхаланупа каласа парать. «Мускаври елкăра юмах нумай. «Морозко» та куртăмăр, Шывпатши те, Винни Пух та пур унта, Иван Царевичпа кашкăр та çапăçрĕç, автанпа ăтăр...» – пӳрне хуçлатсах шутлать Саша.

Шĕнерпуç ачисене Кремльти уява ятарлă йыхрав хучĕпе чĕнсе янă. Вĕсем иккĕшĕ те Кӳкеçри «Колосок» садикри ача-пăча фольклор ансамбльне çӳреççĕ, час-часах «Бичурин тата паянхи самана» музейри мероприятисене концерт номерĕсемпе хутшăнаççĕ. Вĕсен ертӳçи – Марина Яковлева преподаватель. Вăл пире Мускаври елкăна кайма тивĕç пулнă ачасен пултарулăхĕ çинчен каласа пачĕ: «Шăнкăрав» фольклор ансамбльне тĕрлĕ ӳсĕмри ача çӳрет, эпĕ вĕсене чăваш культурипе, халăх сăмахлăхĕпе паллаштаратăп: чăвашла юрлама, ташлама, сăвă калама вĕрентетĕп. Пĕр хутчен эпир Чăваш телевиденийĕ ирттерекен «Мехел» конкурса та хутшăнтăмăр. Сашăпа Арсений – питĕ пултаруллă ачасем, нумай пĕлес, вĕренес туртăм пысăк вĕсен. Юрра-ташша хăвăрт хăнăхаççĕ», – терĕ вăл.

Кремльти елкăна Сашăна ашшĕпе амăшĕ чăваш тумĕ тăхăнтартса илсе кайнă, Удалов Арсение вара – гусар тумĕпе. Эпир вĕсен ашшĕ-амăшĕпе те тĕл пулса калаçрăмăр. Арсений амăшĕ, Ирина Удалова – Кӳкеçри «Бичурин тата паянхи самана» музей директорĕ, Кремльти елкăра ачасем епле савăнни çинчен каласа пачĕ: «Ачасен тавра курăмне ӳстерме яланах тăрăшатпăр. Хальхинче кĕçĕн ывăла Мускаври елкăна илсе кайма йыхрав хучĕ килчĕ те икĕ çемье хаваспах инçе çула тухса кайрăмăр. Ачасем çак уявра чăнчăн Çĕнĕ çул юмахĕ пуррине курса ĕненчĕç. Çакă – вĕсен чунне çунатлантаракан туйăм, пурнăç илемлĕхне, çут тĕнче асамлăхне парнелет. Хам та кун пек елкăра пулса курманчĕ-ха. Маншăн та тĕлĕнмелли нумай пулчĕ. Уявра режиссерсем питĕ вăйлă хатĕрленĕ вара. Кремль Керменĕн Герб залĕнче тем пысăкăш капăр чăрăш кĕтсе илчĕ. Паркет залĕнче пурте хаваслă вăйăсен ытамне лекрĕмĕр. 100 яхăн юмах сăнарĕ пире çавăрса илчĕ, сцена çинче тепĕр 150 сăнар тĕрлĕ юмах лартрĕ. Паха кĕвĕ-юрă композицийĕ, çутă вылявĕ, пуян декораци юмах тĕнчин асамлăхне палăртрĕ. Хĕл Мучин тумĕ çеç мар, сасси те темле асамлăн янăраса илтĕнет...»

ЛЮДМИЛА САЧКОВА

САМАХ МАЙ

Январĕн 5-мĕшĕ валли Кремль елкине кайма тата билетсем пулнă. Шĕнерпуçĕнчи тепĕр икĕ ачана янă.

Эрне мĕнпе асра юлчĕ?

Елена ЗАХАРОВА,
Çĕньял:

– Ку эрне Çĕнĕ çула кĕтсе илнипе асра юлчĕ, паллах, Раштав уявне те палăртрăмăр. Пурте çемйипех килте пуçтарăнтăмăр, хуларан мăнуксем килсе çитрĕç. Уяв сĕтелĕ пуян пулчĕ, çур çĕр çитсен урама тухса ялти тĕп чăрăш патне кайрăмăр, ял çыннисемпе пĕрле савăнтăмăр.

Аякра вырнаçнă ялсенче те пирĕн хаçата çырăнса илме пулать

2013 çулхи I çур çулти çырăнтару хакĕсем.

	Тенкĕпе.
Почта уйрăмĕсенче Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар хулисенче, Шупашкар районĕнче çырăнтараççĕ	213[12]
«Чăвашпичет» киоскĕсенче Республикăн «Чăвашпичет» киоскĕсем вырнаçнă райцентрĕсемпе ялсенче, саласенче çырăнтараççĕ	180[00]
Редакцин альтернатива çырăнтарăвĕ	180[00]

Таван Ен

«Таван Ен» хаçата пĕтĕм республикипех «Чăваш пичечĕ» киосксенче туянма пулать.

КАШНИ ÇЫННĂНАХ ТĂВАН ЕНĔ ПУР.

Шупашкарьенсен тата кашнийĕнех «Таван Ен» пур.

ÇАНТАЛĂК

Çынваййи тата уяв-ушкăн сайтĕнчи пĕлтерӳ тĕрĕк

эрне кун Янв. 11 -18° каç -24° Улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк.

шăмат кун Янв. 12 -16° каç -24° Пĕлĕтлĕ çанталăк.

вырсарни кун Янв. 13 -14° каç -16° Улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк.

Январь, 14	Тунти кун	-12°
Январь, 15	Ытлари кун	-11°
Январь, 16	Юн кун	-15°
Январь, 17	Кĕçнерни кун	-17°

валюта курсĕ Январь, 11-мĕшĕ

$ 30,37

€ 39,64

Кун йĕркинче

ШУПАШКАР РАЙОНĔНЧЕ

Тӳлевсĕр çĕрпе тивĕçтернĕ

Районта пурĕ нумай ачаллă 339 çемьене çĕр участокĕ илме учета тăратнă, çав шутран 115 çемьене – уйрăм çурт-йĕр тума; 222 çемьене – хушма хуçалăх йĕркелеме; 2 çемьене – дача тума. 2012 çул вĕçленнĕ тĕле нумай ачаллă 124 çемье тӳлевсĕр çĕр участокĕсем илнĕ, çав шутран 44 çемье – уйрăм çурт-йĕр тума; 80 çемье – хушма хуçалăх йĕркелеме.

Нумай ачаллă çемьесене районта пурĕ 14 пине яхăн гектар тӳлевсĕр çĕр панă.

Шупашкарта – уявра

Районти пултарулла та чи хастар 70 шкул ачине республикăри Çĕнĕ Çул уявне йыхравланă. Чăваш патшалăх операпа балет театрĕнче иртнĕ уяв каçне ачасен общество пĕрлешĕвĕсен, çарпа патриот клубĕсен активисчĕсем, вĕренӳ отличникĕсем пухăннă. Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев вĕсене Çĕнĕ Çул ячĕпе саламланă, пурне те парнесем панă.

Пулăшу параççĕ

Районти халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр ĕçсĕр çынсене ушкăнпа е уйрăммăн консультацисемпе тренингсем урлă психологи пулăшăвĕ парать. Çакă ĕçе вырнаçма чăрмантаракан тĕрлĕ ыйтăва татса пама, кăмăл-туйăма çĕклеме май парать. Çавăн пекех тренингсем мĕнле профессире вăй хумаллине палăртма, çын туртăмĕсемпе пултараслăхне ĕç рынокĕ ыйтнипе шайлаштарма пулăшаççĕ. Халăха ĕçпе тивĕçтерекен центрта учетра тăракан ĕçсĕр çынсем «Достижение цели», «Поверь в себя», «Сотвори себя сам», «Технология успеха», «Управляй своей жизнью» и «Управление стрессами» тренингсене çӳреççĕ. Занятисене «Аспект» УМЦра психологсем ирттереççĕ.

Çĕнĕ кайăк йышланнă

Шупашкар район администрацийĕн ЗАГС пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, 2012 çулта районта 753 ача çуралнă (2011 çулта – 702): 370 арçын ача, 383 хĕрача. 12 пепкене çул çитмен хĕрсем çуратнă (2011 çулта – 5). Тулли мар çемьесенче 174 ача (2011 çулта – 166) çут тĕнчене килнĕ. Ачасем ытларах октябрь (75), май тата июль уйăхĕсенче (73-шер) çуралнă, апрель уйăхĕнче вара чи пĕчĕк кăтарту – 49. 2012 çулта районта 6 йĕкĕреш кун çути курнă.

Ветеран çĕнтерĕвĕ

Январĕн 6-мĕшĕнче Челябинск хулинче хăвăрт утас енĕпе Пĕтĕм Раççейри йăлана кĕнĕ XIV ăмăрту иртнĕ. Унта пирĕн ентеш Петр Федоров та (Кӳкеç) хутшăннă, спортсмен-ветеран-сен хушшинче II-мĕш вырăн çĕнсе илнĕ. Çав ятпа ăна Дипломпа тата кĕмĕл медальпе наградăланă. ■

ÇУЛСЕМ ТАТА ÇЫНСЕМ

Шыв тумламĕ нухрат ыйтать

Редакци сăн ӳкерчĕкĕ

Алькеш ялĕнчи Цветочнăй урамри 12-мĕш çуртри Михайловсен килĕнче шыв колонки кĕртнĕ, счетчик та лартнă. Çывăх кунсенчех шыв памалла.

Тавра çул-и, тӳрĕ çул-и – этем ĕмĕр тăршшĕпех утать. Калăн, тем шырать вăл. Этемлĕх аталанса кайнăранпах апат, шыв, ĕç, хăйне юлташ шырать. Çын яланах юхан шыв çумне вырнаçса ял пуçланă, хула çĕкленĕ...

Çĕньял ял тăрăхĕнчи Алькеш ялĕнче 2010 çулхи шăрăх вăхăтра килти çăлсенчен шыв тарнă хыççăн ял çыннисем питĕ хыпăнса ӳкни пирки эпир ун чухне çырса кăтартнăччĕ, алькешсен пĕртен-пĕр шанчăкĕ чикансем пурăнакан поселок патĕнчи шурлăхран (унта чикансем хăйсен пĕтĕм çӳп-çапне бульдозерпах тĕксе антарса тăни çинчен те çырса кăтартнăччĕ) юхса анакан çăл шывĕччĕ. Мĕнле ĕçмелле çав шыва? Ял çыннисем республикăри «Таса шыв» программăна кĕресшĕн вырăнти тата çӳлти влаççем патне çырусем çырчĕç...

Лару-тăру улшăнса пырать-и-ха?

«Çынсем çул, шыв ыйтаççĕ, – терĕ Çĕньял ял тăрăх пуçлăхĕ Евгений Зубков, эпир ун патне çак ыйтупа каласа кĕрсен. – Чăнах та, Алькешре пурăнакансен шыв ыйтăвĕ питĕ çивĕч тăчĕ, кунта çакна палăртас пулать: ял старости Светлана Васильевăпа вырăнти депутат Аркадий Павлов çине тăнипе вĕсем республика программине кĕме пултарчĕç, проект хатĕрлесе пачĕç. Паянхи кун тĕлне ялти кашни килех шыв пăрăхĕсем кĕртсе пĕтернĕ ĕнтĕ – 4,5 км хывнă, абонент кĕнекисем хатĕрлеççĕ. Çак кунсенче шыв яраççĕ».

«Çуллахи çав шăрăх тапхăрта район администрацийĕн капиталлă строительство тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ Вячеслав Сидоров ятарлă машинăпа алькешсем патне ĕçмелли таса шыв турттарассине йĕркелерĕ», – аса илет Евгений Аркадьевич.

ШУТА ИЛМЕ

Шыв тумламĕ кун пек чухне нухрат ыйтать. Мĕн хака ларать-ха алькешсен таса шывĕ? Республикăн «Таса шыв» программине кĕнĕ май бюджетран вĕсене 2 миллион тенкĕ уйăрса панă, Çĕньял ял тăрăх администрацийĕ – 400 пин тенкĕ, Алькеш ял çыннисем вара килсерен пуçтарса 3 миллион та 800 пин тенкĕ хывнă.

Шыв тата çул ыйтăвĕсем ытти ялсенче еплерех-ши? Пĕчĕк Аначкасси тата Чумкасси ялĕсенче шыв хальлĕхе кĕртмен-ха. Эпир пĕр хутчен çеç мар çырса кăларнă Арккассинчи кĕпере юсама çывăх вăхăтра черет çитет тесе шантарчĕ Евгений Аркадьевич.

«Ĕçĕ нумай, пурне те харăс епле туса пĕтерĕн? Умра тăракан çивĕч ыйтусене черетпе татса пыратпăр. Акă çулсем пирки калас пулсан Çĕньялта икĕ урама кирпĕч ванчăкĕсемпе сарса хытарнă-ха, Çĕнĕ урамра тата Вишневăй урамсен пĕр пайне çеç сарнă хальлĕхе. Пирĕн ял тăрăхĕнче пĕтĕмпе 40 км çул, çав шутра Мошкасси ялĕнче 1800 м сарнă. Якутар, Арккасси, Шăмăшри ялсенче сарман-ха. Ку ĕçсем – умра. Илпешре пĕве тума пуçларăмăр. Пĕр урамран тепĕр урама каçма дамба туса пĕтеретпĕр. Тепĕр çул валли вара Кăкшăм шывĕ урлă кĕпер тума палăртатпăр», – тесе Евгений Аркадьевич пире ял тăрăх картти çинче палăртнă планпа паллаштарчĕ.

ЛЮДМИЛА САЧКОВА

ЫРĂ ТĔСЛĔХ

Кунашир утравĕ çинче...

2012 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕнче кĕркуннехи призыв вĕçленчĕ. Ытти çĕрти пекех Шупашкар районĕнчен те вун-вун каччă салтак атти тăхăнчĕ. Çавăн пекех çамрăксем хĕсметрен таврăнчĕç. Шупашкар районĕнчен кайнă 59 çамрăк кĕркунне килĕсене таврăннă, икĕ районпа (Сĕнтĕрвăрри тата Шупашкар районĕсемпе) пурĕ 96-ăн килнĕ. Вĕсенчен пĕри Мăн Маркара пурăнакан Владимир Яковлев. Шăпах ун çинчен паян сăмахăм.

Тивĕçе пурнăçламаллах

Çакна тĕпе хурса салтака кайма шут тытнă та ĕнтĕ Мускав автомобильпе çул-йĕр университечĕн дипломне алла илнĕ качча. Малтанах комисси çывăхра кăна служба ирттерме палăртнă пулин те шăпа ăна инçете – Курильти Кунашир утравне – илсе кайнă.

– Вырăна çитиччен сакăр кун поездпа, 2 кун çурă караппа кайрăмăр, – хĕсмете кайнине аса илет халь Владимир. Каччă салтакран декабрь вĕçĕнче таврăннă. Пысăк хăпартланупа каласа парать вăл унти пурнăç çинчен. Ăна тип çĕр çинчи çара йышăннă. Çар машини шанса панă. «Аслă пĕлӳ илни питĕ кирлĕ пулчĕ мана унта. Сăмахран, машина çĕмĕрĕлсен ăна хамах юсаттăмччĕ», – каласа кăтартать тин çеç салтак атти хывнăскер.

Çулталăк сисĕнмесĕрех иртсе кайнă. «Малтан çеç вăхăт вăрах шутăнан туйăнать. Чи йывăрри – пирвайхи уйăхсем», – тет Владимир. Тăванĕсенчен аякра пулни кăна унăн кăмăлне кăшт салхулатнă. Анчах тепĕр енчен сăвăнăç та пулнă. Инçетри киленчен çыру илни. Кĕсье телефонĕпе каласа ирĕк панă пулин те качча амăшĕ патне çырусем янă. Кашни эрнере тенĕ пекех вара килĕнчен çыру килессе чăтăмсăрран кĕтнĕ. «Тăван тăрăхран конвертра хыпар илесси мĕн тери савăнăç!» – хавхаланса каласать ĕнерхи салтак. Паянхи пурнăçра информаци тытăмĕ лайăх аталаннă вăхăтра ĕлĕкхи ырă йăлана пăрахăçа кăларманни тем пекех паха.

Хĕсмете Владимир пурнăç шкулĕпе танлаштарать. «Унта пурнăç тутине пĕлетĕн», – тет. Çавăнпах ĕнтĕ кашни яша вăл салтак пăтти çисе курма сĕнет. Мĕншĕн тесен унта çеç атте-аннерен инçетре, хăвăн çине çеç шанса пурăнма хăнăхатăн. Кайран вара чылай çăмăлрах пулать. «Салтака кайса килнисене «Маттур», салтак атти тăхăнма юрăхлисене вара кашнине «Каймалла» теес килет», – хăйĕн шухăшне палăртрĕ яш. Çак сăмахсемпе, ахăртнех, нумайăшĕ килĕшет. Сывлăхлă каччăн çĕршыва хӳтĕлемеллех. Кунсăр пуçне тата çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен килнĕ çынсемпе паллашатăн. Акă Владимир унта Тутарстан, Çĕпĕр, Дагестан каччисемпе туслашнă.

Тилĕсем чупса çӳренĕ...

Кунашир утравĕ питĕ хитре вырăнта вырнаçнă иккен. Çакна Владимир чылай тĕслĕхпе çирĕплетрĕ: сăртлă-туллă вырăнсем, тинĕс... «Виçĕ вулкан куртăм», – унти илеме сăмахпа каласа пама тăрăшать вăл. Çут çанталăк условийĕсем çирĕпрех пулин те вăл хăйĕн илемĕпе кайча тытăкăна илни палăрчĕ. Çакăнтах пĕр кăсăклă саманта аса илчĕ. Пĕрремехинче салтаксене 5 кунлăха вĕрентĕве илсе кайнă. Çук. Пĕр-пĕр учреждение мар, хире. Палатăсем лартса кун кунланă вĕсем. «Тĕрлĕ хăнăхтарусем турăмăр, пеме вĕрентĕмĕр, – каласу çăмхине сӳтет яш. – Маншăн чи кăсăкли çавăнтах тилĕсем чупса çӳрени пулчĕ. Шел, упасене курма тӳр килмерĕ çав, юлташăмсем вĕсене те курнă».



ШУТА ИЛМЕ

2012 çулхи кĕркуннехи призывра республикăран 1265 çын хĕсмете кайнă.

Хĕсметри пурнăç тата чылай самантпа асра юлнă: хăйне евĕрлĕ режимпа, тинĕс леш енчи Япони çĕршывне курнипе, тăраниччен хĕрлĕ пулă çинипе... Хĕсметри «дедовщина» пирки нумай илтнĕ, ун пирки тĕрлĕ сас-хура çӳрет. Çавăнпа та салтак атти тин çеç хывнăскертен ун пирки ыйтмасăр пултараймарăм. «Дедовщина» пур тесе каламастăп. Хĕсмет хĕсметех, унта çирĕп йĕрке», – шухăшне палăртрĕ вăл. Владимир каланă тăрăх, казармăсенче видеокамерăсем лартма палăртнă пулнă.

Юлашкинчен Владимиртан малашнехи ĕмĕтсем çинчен те ыйтрăм. «Ĕçлемелле», – йăл кулса хуравларĕ вăл.

ЛЮБОВЬ СЕМЕНОВА

Вектор

ЯЛ ТĂРĂХĔСЕНЧЕ

Ят тухнисем

Çĕньял-Покровски ял тăрăхĕнче иртнĕ çулхи кĕркри призывра салтака юрăхлă 7 çамрăк пулнă. Çав вăхăтрах тăван çĕршыв умĕнче хăйĕн тивĕçне пурнăçланă салтаксем те килĕсене таврăнаççĕ. Çак кунсенче **Мăн Кивпулăха** Александр Петров (1993 çулхи) таврăннă. Ял-йыш, тăванĕсемпе кӳршисем ăна курма пухăнă, саламланă.

«Раштав çăлтăрĕ тӳпере йăлтăртатĕ»

www.gov.cap.ru

Сурхури умĕн **Янăшри** культура çуртĕнче «Раштав çăлтăрĕ тӳпере йăлтăртатĕ» театрализациленĕ представлени иртнĕ. Унта хутшăннисем сурхури юррисене юрланă, çакăншăн çынсем вĕсене пылак çимĕçсемпе, икерчĕсемпе сăйланă. Кунпа пĕрлех тупмалли юмахсен тупсăмне пĕлнĕ, вăйăсем вылянă, Турă пӳрнине тупмашкăн юмăç пăхнă.

Пĕрле юрланă

Нумаях пулмасть **Кăшавăшри** культура çуртĕнче чăваш эстрада çăлтăрĕсем хутшăннипе уяв концерчĕ иртнĕ. В. Христофоров, В. Адюков, М. Федоров, О. Кондратьева, И.Зайцева куракансене хăйсен илемлĕ сассисемпе савăнтарнă. Зал вĕсене ăшшăн кĕтсе илнĕ, тăвăллăн алă çупнă, вĕсемпе пĕрле юрланă. ■

ИЛЕМ ТĔНЧИ

Кунта яланах чун туртать

Редакци сăнӳкерчĕкĕсем

Çĕньялти халăх театрĕ драма кружокĕ пулса 1930 çулсенчех йĕркеленнĕ. Паянхи кун та ял театрĕ халăх чунне илĕртме пăрахман.

Пушкăртстанри Чăваш культурин обществи чĕннипе иртнĕ çулхи ноябрĕн 15-23-мĕшĕсенче Çĕньял халăх театрĕ аякри тăванăмăрсем патĕнче гастрольте пулнă, чăваш ялĕсенче «Вăрмана юлнă çамрăклăх» спектакль кăтартнă. ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Зинаида Петрова 37 çул кунти халăх театрĕнче ĕçлет, вĕсенчен чылайăшне – режиссер тата ертӳçĕ пулса. Ĕçченлĕхĕ те, пултарулăхĕ те, пуян тавра курăмĕ те пур унра. Театрăн илемлĕх ертӳçинче ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Валентин Захаров вăй хурать. Халăх театрĕн ятне вĕсем кашни 2-3 çулта пĕрре хӳтĕлесе пыраççĕ: 1977 çулта – Александр Ларченковăн «Пĕр хурăн çеç пĕлет» пьеси тăрăх лартнă спектакльпе, ун хыççăн — Борис Васильевăн «Шурăмпуçĕ лăпкăччĕ» спектаклĕпе, нумаях пулмасть вара – Александр Пăрттан «Вăрмана юлнă çамрăклăх» спектаклĕпе.

– Пушкăртра эпир сӳренĕ ялсенче 20 çул пĕр пултарулăх коллективĕ те пулман иккен, çавăнпа та пире хапăл туса кĕтсе илчĕ унти халăх, – хавхаланса каласа парать Зинаида Николаевна. – Хамăрăн пĕрремĕш спектакле эпир Чекмакуш районĕнчи Юмаш ялĕнче лартрăмăр. Куракансем лăпкăн, ăшшăн йышăнчĕç. Чи аякри яла, Кожай-Семеновкăна, çитсе куртăмăр. Ку ялта ӳссе çитĕннĕ пултарулла çынсем – Озеровсем, Яковлевсем, Павловсем, Андреевсем, Васильевсем, чылайăшĕ кайран Шупашкара куçса кайни çинчен каласа пачĕç пире вĕсен ентешĕсем».

Пăслăк – Пушкăртри чи пысăк чăваш ялĕсенчен пĕри. Çĕньялти информацине культура центрĕн директорĕ Андрей Патри кунта «Виçĕ ту çăлтăрĕсем» ансамбль участникĕсем валли мастер-класс иртернĕ.

Тĕне кĕнĕ чăвашсем 300 çул каялла йĕркеленĕ Пелепей хулине çитиччен Çĕньял халăх театрĕ чăвашсен паллă поэчĕсем Константин Ивановпа Ухсай Яккăвĕ çуралнă Слакпуç ялне кĕрсе тухнă, вĕсен вил тăприйĕ çинче пулнă, палăкĕсем умĕнче пуç тайнă. Çĕньялсем Аваркас районĕнчи авалхи чăваш тĕнĕпе пурăнакансем патне те, Треппĕл ялне, çитсе курнă.

– Иртнĕ çулхи ноябрĕн 16-мĕшĕнче эпир Туймаса хулинче спектакль лартрăмăр, – малалла каласа парать Зинаида Петрова. – Пирĕн артистсем куракансен чĕрисенче çутă туйăм хăварчĕç. Малалла эпир Миякински районĕнчи Кожай-Семеновка ялĕнче, Ермеккей районĕнчи Вăтам Кармалта, Кармăскал районĕнчи Чишма ялĕсене çитсе спектакль кăтартрăмăр. Юлашкинчен чăвашсем пурăнакан Стерлитамак хулинче гастроле вĕçлерĕмĕр, – тулли кăмăлпа каласа пачĕ Çĕньял халăх театрĕн ертӳçи Зинаида Петрова.

Çĕньял халăх театрĕ кашнинчех республикăри халăх театрĕсен «Ахрăм» фестивальне хутшăнать. ИКЦри халăх фольклор ансамблĕпе пĕрле халăх театрĕ Николай Семенован «Çичĕ кашăк, çичĕ чашăк» пьесипе спектакль лартнă. Ăна фольклора тĕпе хурса йĕркеленĕ. Çак спектакльте выляннă рольшĕн Надежда Таерова «Чи лайăх хĕрарăм ролĕ» номинаци çĕнтерӳçи ятне илме тивĕç пулнă. Ку конкурсра Андрей Патри те «Чи лайăх эпизодлă роль» номинаци дипломанчĕ ята илнĕ.

Юлашки çулсенче вĕсем икĕ хутчен Турцире гастрольте пулнă, ытти театр пултарулăхĕпе паллашса килнĕ, хăйсен ăсталăхне кăтартнă.

Çĕньялти информацине культура центрĕнчен хĕлле те, çулла та халăх татăлма пĕлмест. «Çур сехетрен гастроле тухса каймалла тесен пурте палăртнă вăхăта хатĕрленсе çитсе тăраççĕ. Çапла ĕçлесе çынсене те савăнтаратпăр, хамăр та савăнатпăр», – тет Зинаида Николаевна.

Концертсемпе спектакльсемсĕр пуçне Çĕньялти клубра (теес килет ĕлĕкхиллех) час-часах тĕрлĕ конкурс-вăйă иртет, кружоксем ĕçлеççĕ. Кунта яланах чун туртать, кунта яланах ăшă.

■ ЛЮДМИЛА САЧКОВА

САМАХ МАЙ

Çĕньялти ИКЦра халăх театрĕ, халăх фольклор ансамблĕ, ачасен театрĕ, халăх ташă ансамблĕ, ачасен виçĕ ташă ушкăнĕ (5 çултан пуçласа 8 çул таранччен) пур.

ĔÇЛĔ ÇУЛ ÇӲРЕВ

Чăх-чĕп фабрикин çитĕнĕвĕсем

www.cap.ru

Январĕн 10-мĕшĕнче «Чувашский бройлер» ОАО ĕçĕ-хĕлĕпе, унăн çитĕнĕвĕсемпе паллашма ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов, ЧР ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов, Шупашкар район администраци пуçлăхĕ Георгий Егоров асăннă предприятире пулчĕç. Цехсене, чăх-чĕп усракан çĕнĕ витесене кĕрсе курчĕç, унта вăй хуракансен ĕç условийĕсемпе паллашрĕç, ветеринари лабораторийĕ мĕнле ĕçленине тĕрĕслерĕç.

Предприяти районта çеç мар, республикăра та чи вăйлă аталанса пыракан предприятисенчен пĕри шутланать. Кунта пурĕ 30 яхăн цех, унта 600 ытла çын ĕçлет. Кашни кун 20-25 пин пуç чăх пусаççĕ, 25 пин çăмарта туса илеççĕ. Вăтам ĕç укçи – 15-17 пин тенкĕ. Кунта туса илекен продукцие хамăрăн республикăрах сутса пĕтереççĕ, тепĕр чухне Чулхула облаçне е Хусана ăсатни пулкалать. «Чувашский бройлер» ОАОра ăратлă çамрăк чĕпсем çитĕнтерекен, çăмарта тăвакан чăхсене усракан, чăх-чĕп пусакан цехсем, зоотехника тата ветеринари лабораторийĕсем ĕçлеççĕ. Кăтартусем лайăхлансах пыраççĕ. Хальлĕхе чăх-чĕп усракан икĕ тĕрлĕ клетка пур – ПКМ (кивви) тата КП-25. Киввисене çĕннисемпе улăштарсах пыраççĕ, модернизацилеççĕ.

Юлашкинчен асăннă фабрикăн акт залĕнче республикăн влаç органĕсенче ĕçлекенсем журналистсемпе пресс-конференци ирттерчĕç, фабрикăра ĕçлекен халăх умĕнче ĕçре малта пыракансене патшалăх наградисемпе чысларĕç. ■

ЫЙТУ-ХУРАВ

Мăшăрланма ыйтнисем кăна мар

? Мăшăрлантарма ыйтса çырнă заявление ЗАГС пайне каймасăр Интернет урлă электрон мелĕпе ярса пама май пур-и?

Евгения ПЕТРОВА, Тутаркасси ял тăрăхĕ

Светлана НИКОЛАЕВА, Шупашкар район администрацийĕн ЗАГС пайĕн тĕп эксперт-специалисчĕ:

– Законпа килĕшӳллĕн çырăниччен пĕр уйăх малтан пулас мăшăрсен ЗАГС пайне кайса заявлени памалла. Чылайăшĕн çакăн чухне ĕçрен отгул, тепĕр хулана е район центрĕсене тухса çӳреме тивет. Ку, паллах, чылай чăрмав кӳрет. Çемье çавăрма тĕв тунă каччăпа хĕр мăшăрлантарма ыйтса çырнă заявление пĕр уйăх маларах та пама пултараççĕ. Çак ĕçе Интернет урлă тума май пур. Сирĕн муниципалитет тата патшалăх пулăшăвĕ паракан пĕрлĕхлĕ Портала – **www.gosuslugi.ru** – кĕмелле те мăшăрланнине регистрациленĕ кунтан, 2,5 уйăхран маларах мар тата 5,5 уйăхран каярах мар, заявление электрон мелĕпе ярса памалла. Ăна Чăваш Республика территорийĕнчи кирек хăш ЗАГС пайĕ те йышăнать. Чи малтан сирĕн Порталта вырнаçнă «Регистрация» пая кĕрсе хăвăрăн «Личный кабинет» йĕркелемелле. Компьютер сĕннĕ икĕ вариантран пĕрне, «Стандартная» учет хутне суйламалла, унтан хăвăр ăçта пурăннине кăтартмалла. «Электронные услуги» пайра ЧР Юстици Министерстви патне кĕрсе «Государственная регистрация заключения брака» варианта суйламалла. «Получить услугу» пайра хăвăр кăтартусене çырмалла, ЗАГС пайне, вăл сĕннĕ çыранмалли кун тата вăхăт суйламалла. ЗАГС пайĕ заявление пăхса тухса хурав ярĕ. Унпа килĕшӳллĕн пулас арăмĕпе упăщкин палăртнă кун ЗАГС пайне кайса çырăну кунне тата вăхăтне алă пусса çирĕплетмелле, çакăн хыççăн вĕсенчен заявление йышăнаççĕ. Çавăн пекех муниципалитет тата патшалăх пулăшăвĕ паракан пĕрлĕхлĕ Портал урлă ача çуралнине, хут уйăрттанине, çын вилнине регистрацилеме тата çурални çинчен калакан свидетельствăна тепĕр хут илме май пур.

Сăмах май, пĕлтĕрхи 11 уйăхра Чăваш Республикин ЗАГС пайĕсене 410 электрон заявлени килнĕ. Вĕсенчен 138-шĕ мăшăрланнине регистрацилеме ыйтнисем. ■

Пурнăç тапти

ИРТНĔ ВĂХĂТ

Кӳкеçри вăтам шкул

Çак сăн ӳкерчĕке 1939 çулта 9-мĕш класа ăнăçлă пĕтернĕ ятпа пичетленĕ.

Кунти шкул хăй алăкĕсене 1886 çул пуçламăшĕнче уçнă.

Парта хушшине пурĕ 28 ача ларнă. Уроксен ытларах пайне Апашри чиркӳ çыннисем ертсе пынă. 1915 çулта Александр Капитонов ертсе пынипе ятарласа çĕнĕ шкул çуртне хăпартнă. 1932 çултан вăл вăтам шкул ята тивĕçнĕ. Тепĕр пилĕк çултан малтанхи кăларăм пулнă. Çакăнта пĕлӳ илме 20 ытла çамрăк çӳренĕ.

■ ЛЕОНИД ПАВЛОВ, ЧĂРĂШКАССИ

КАШНИН ХĂЙĔН ПУРНĂÇĔ

Çĕнĕ çула киле кайни

Кӳ ĕç чылай çул каялла пулса иртнĕччĕ. Эпĕ, университетра вĕренекенскер, Çĕнĕ Çула киле кайма пуçтарăнтăм. Общежитире радио çуккипе çанталăк çинчен пĕлтернĕ хыпара илтмесĕрех юлнă. Юлашки зачета парса пĕтертĕм те вокзала вĕçтертĕм, хăвăртрах билет илтĕм те автобуса кĕрсе лартăм.

Çĕнĕ Çул умĕн яланах çын нумай пулаканччĕ. «Мĕншĕн-ха хальхинче вокзалта халăх сахал, автобус çинче те çичĕ-сакăр çын çеç?» – шухăшласа пыратăп. Çул çинче те машина нумай мар. Çанталăк питех сивĕ мар – 12-15 градус çеç. Эпĕ кĕске куртка тăхăннă, урара – хĕллехи çăмăл та çӳхе атă. Пĕремĕш тĕлĕнтермĕш япала – ман умра ларса пыракан çирĕп те нăкă хĕрарăм тăчĕ те пысăк сумкинчен çăм утиял туртса кăларчĕ, пĕркенсе ячĕ. Уринче хăйĕн – мăн çăм атă-ха тата. «Ку хĕрарăм мĕншĕн çапла хăтланать-ши?»– текен шухăш пуçра çиçсе илчĕ çеç, урасем шăнма пуçланине туйрăм. Кайсан-кайсан хайхи чăтма çук сивĕ пулса кайрĕ, ним тума аптăранипе урасене турккӑсем пек хуçлатса хам ая хурса лартăм. Тин эпĕ хĕрарăм мĕншĕн утиял пĕркеннине ăнлана пуçларăм. Эх, çул çине вĕçкĕнленсе тухмалла марччĕ иккен...

Анчах кая юлтăм ӳкĕнме. Сивĕтнĕçемĕн сивĕтсе пычĕ. Мĕн тумалла? Ура çине сиксе тăрса салонра каллĕ-маллĕ утма пуçларăм. Çапла тăрмашкаланса çитмелли çĕре çитрĕмĕрех. Яла кĕмелли çул юппинче анса юлтăм. Манăн тата икĕ çухрăм утмалла-ха...

Автобусран урана кăларса юр çине пуссанах çăмăл атă тимĕр пек шанк хытрĕ те урана çирĕппĕн ярса илчĕ. Эпĕ чупма хăтланса пăхрăм, хушăран сике-сике ташласа та илтĕм – урана вара хаяр сивĕ тимĕр хĕскĕч пек хĕстерсе тытрĕ. Мĕн тумалла? Каç та пулать. Çĕнĕ Çул умĕнхи хĕллехи каç сивĕ уйра шăнса вилес хăрушлăх куç умне тухса тăчĕ. Мĕн тумалла?! Çак ыйту пуçа питĕ хăвăрт «ĕçлеттерме» пуçларĕ пулмалла. Эпĕ алăри яка дипломат-сумкăна пăрлă çул çине пăрахрăм та тапса пыма пуçларăм. Вăт! Идея!.. Диплома тапмассерен урана вĕри юн анма пуçларĕ. Капла алăсем те шăнмаççĕ – кĕсьере. Пĕтĕм вăйпа тапатăп та диплома та, вăл шуса каять, хам ун хыççăн чупатăп, хăваласа çитетĕп те тепре ик уран сиксе тапатăп – дипломат таçта çитиех вăркăнать. Унта вара манăн – зачетка та, кĕнекесем те, аттеанне валли илнĕ хула кучченеçĕ те. Дипломат çăмăл пулнă пулсан ăна тапнин усси сахалччĕ. Дипломат самаях йывăр. Вăйпа тапатăп та ура тӳрех вĕриленсе каять.

Çапла аппаланса çитрĕм-çитрĕмех тăван яла. Кунта шăнса вилместĕп-ха ĕнтĕ тесе дипломата алла илтĕм çеç, ура шанк хытса ларчĕ. Татах дипломата çул çине пăрахрăм, татах тапма пуçларăм. Хапха алăкне ярса илсен çеç дипломата алла илсе çил пек пӳрте вĕçтерсе кĕтĕм.

– Ах! – терĕç те аттепе анне, шуйханса ӳкрĕç. – Мĕнле çитсе ӳкрĕн? Мĕнле шăнса вилмерĕн? Паян 50 градуса та çитет вĕт сивĕ!

Манăн питĕ йĕрес килет, анчах кăмака çумне тĕршĕнтĕм те ним калама пĕлместĕп. Манăн тутасем те хытса кайнă иккен... Дипломат ăшĕ те татăк-кĕсĕк пулса тăчĕ. Сĕтел хушшине вĕри яшка çитерме лартсан çеç эпĕ йĕре-йĕре хам вилĕмрен епле хăтăлни çинчен каласа патăм.

■ ЛЮДМИЛА САЧКОВА

АСЛĂ ĂРУ

Пуян кăмăллă фельдшер

Эпĕ вулакансене пирĕн ялти фельдшерпа – пурте хисеплекен тата юратакан Георгий Павловпа – паллаштарасшăн.

Вăл Улатăркассинче çуралнă, Шуртанри тулли мар вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн Канашри фельдшерсен шкулĕнчен вĕренсе тухнă. 1943 çулхи декабрь уйăхĕнче ăна Хĕрлĕ Çара илнĕ, Мускав çар округĕнчи 3-мĕш санинструкторсен курсĕнче вĕреннĕ. 1944 çулта Георгий Павлович – медицина службин кĕçĕн лейтенанчĕ, 1944 çулхи июнь уйăхĕнчен пуçласа 57-мĕш армин 3-мĕш Украина фрончĕн 93-мĕш стрелковăй дивизин 129-мĕш стрелковăй полкĕнче санитари взвочĕн командирĕ пулса тăшмана хирĕç çапăçнă. Пирĕн енташ Молдави çĕрĕ çинче Суворово пунктне, Белград, Будапешт хулисене ирĕке кăларнă çĕре хутшăннă, Венгрири Раба юхан шывĕ урлă нимĕçсене хăвалана, Австрири Альп тăвĕсен хушшинчи Балатон кӳлли патĕнчи çапăçусене, Румыние, Болгарие, Югославие, Венгрие, Австрие ирĕке кăларнă çĕре хутшăннă. 1946 çулхи июньтен пуçласа 1947 çулхи мартчен вăл минометчиксен полкĕнче службăра пулнă. Вăрçăран вăл «Будапешта илнĕшĕн» медальпе, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе тавраннать.

Акă Георгий Павлов çартан демобилизацине тăван ялне тавраннать, ăна тӳрех Панникассинчи фельдшерпа акушер пунктне ĕçлеме йышăнаççĕ. 1950 çулта вара Макаçри фельдшерпа акушер пункчĕн заведующине лартаççĕ. 1972 çултанпа вăл Шупашкарти васкавлăй пулăшу машини çинче ĕçлет. Ăна пĕр хутчен çеç мар Макаç ял Совечĕн депутатне, Шупашкар районĕн депутачĕсен Пухăвĕн депутатне суйлаççĕ, ĕçре тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Тав хучĕсемпе Хисеп грамотисем илме тивĕç пулать.

Георгий Павлович питĕ тĕлĕнмелле çынччĕ, вăл хăйĕн ĕçне тĕплĕ пĕлетчĕ, час-часах пирĕн пата шкула ачасен сывлăхне тĕрĕслеме пыратчĕ. Ăна ял çыннисем «тухтăр» тесе чĕннĕ, чунран хисепленĕ. Вăлах ял çыннисемшĕн гинеколог та пулнă. Чирлĕ çынсем больницăна пырсан час-часах апат та çитерсе яратчĕ. Эмел усса пытăр тенĕ ĕнтĕ. Пĕрремĕш хинче, ас тăватăп, эпĕ пĕчĕккĕ чухне выçă пулнипе кĕтӳ кĕтсе çӳреме килĕшрĕм. Черетпе вĕсем патне апат çиме кĕрсен Павловсем мана сĕт яшки çитерчĕç. Çав тери тутлăччĕ, паянхи кун та асрах. Ун чухне эпир чухăн, анчах кăмăлпа пуян пулнă.

Георгий Павлович çемьелĕччĕ, арăмĕ учительница пулнă. Икĕ хĕр çуратса çитĕнтерчĕç вĕсем – пĕри, Эвелина, ашшĕ пекех медсестрана вĕренсе тухрĕ те хăйпе пĕрле ĕçлерĕ. Тамара бухгалтер профессине килĕштерчĕ.

■ ХРИСТОФОР МАКАРОВ, УРАЙ МАКАÇ

САМАХ МАЙ

Кăнтăрла-и, каç-и е çĕр варри-и – Георгий Павлович ниме пăхмасăр чирлисем патне пулăшма тухса каятчĕ. Каялла вара ăна лаша кӳлсе урапа çине лартса ăсатса янине куркалаттăмăр. Ку ĕнтĕ ял çыннисем хисепленине кăтартатчĕ. Халăх ăна питĕ юрататчĕ.

САВĂ СĔВЕМĔ

Шăнса кӳтнĕ...

Çывăх мар пирĕн ялăн вăрманĕ:
Аякра. Кӳршĕ ял леш енче...
Ах! Çаврăнса тухсан-и çил-тăманĕ
Чĕр-нуша – вутă лавĕ çинче.
Лашисем ун чухне пит хавшакчĕ
Ир те каç пăтратни çитермен.
Çунасем сулнăка яраватчĕç,
Вуттуна майласам çĕнĕрен.
Пуртăпа та татсах шаршанланă
Кӳрсе килнĕ шĕшке чĕрĕллех.
Сарайне те унпах-çке тултарнă:
Выльăхсемшĕн кăшт хӳтĕ кирлех.
Çунаймасăр самай тарăхтарнă
Чĕрĕлмесĕр вут хутнă чухне.
Çавăнпа та ăна шаршанланă
Типĕтме кăмака çывăхнех.
Асăмрах-ха паян: Сĕнерш! тенĕ
Çап турттарнă умри сулнăксем.
Ав, курсассăн каллех чĕлпĕрленнĕ:
Ӳсĕмри, эх, юлташ-лавçăсем!..
«Вал хапхи» иртсенех ывăнмастчĕç:
Киле май, январ-тусăмсем!
Ун патне çеç çитсен савăнатчĕç:
Шăнса кӳтнĕ çумри ямшăксем!..

■ АНАТОЛИЙ МАКСИМОВ, СĔНТĔРВĂРРИ РАЙОНĔ, УСЛĂ ПУКАШ

ТВ Эрне

ТЕЛЕСЕРИАЛ
ХУДОЖЕСТВЕННЫЙ ФИЛЬМ
ДОКУМЕНТАЛЬНЫЙ ФИЛЬМ
Мультфильм

ЯНВ 14 понедельник
тунти кун

Понедельник, 14 января

ПЕРВЫЙ
5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 23.30, 3.00 Новости
5.05 Доброе утро
9.15 Контрольная закупка
9.45 Жить здорово! **12+**
10.55 Модный приговор
12.20 Время обедать!
13.00 Доброго здоровьица! **12+**
14.00 Другие новости
14.25 Понять. Простить **12+**
15.15 Хочу знать
15.50 Дешево и сердито
16.35 Ты не один **16+**
17.05 НЕРАВНЫЙ БРАК 16+
18.50 Давай поженимся! **16+**
19.50 Пусть говорят **16+**
21.00 Время
21.30 МЕТОД ФРЕЙДА 16+
23.50 **ВСЕ ПУТЕМ 16+**
1.45, 3.05 **И У ХОЛМОВ ЕСТЬ ГЛАЗА 18+**

РОССИЯ 1
5.00 Утро России
9.00 1000 мелочей
9.45 О самом главном
10.30 КУЛАГИН И ПАРТНЕРЫ **12+**
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50 ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ 12+
12.50 Дело Х. Следствие продолжается **12+**
13.50, 16.45 Вести. Дежурная часть
14.50 ЕФРОСИНЬЯ. ТАЕЖНАЯ ЛЮБОВЬ
15.45 ТАЙНЫ ИНСТИТУТА БЛАГОРОДНЫХ ДЕВИЦ
17.50 ВКУС ГРАНАТА 12+
20.30 Спокойной ночи, малыши!
20.40 Прямой эфир **12+**
21.30 МАРЬИНА РОЩА 12+
1.00 Девчата **16+**
1.40 **1.40** Вести +
2.05 **ДОМ ЧЕРНЫХ ТЕНЕЙ 16+**

ЧУВАШИЯ
6.07, 6.35 Вести-Чăваш ен
7.07, 7.35 Утро Чувашии
8.07, 8.35 Утро Чувашии
11.30 Вести-Чăваш ен
14.30 Вести-Чувашия
17.30-17.50 Вести-Чăваш ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия
На канале Россия 2
12.00-12.30 Вести-Спорт-Чувашия

РОССИЯ К
7.00 Евроньюс
10.00 Наблюдатель
11.15, 1.40 ПЕРРИ МЭЙСОН
12.10 Секретные проекты. Мобильный для Лубянки
12.40 Сергей Бонди. Огонь в очаге
13.20 Химба снимают!
14.15 Линия жизни
15.10 Пешком... Москва женская
15.40, 19.30, 23.30 Новости культуры
15.50 Ф.М. Достоевский. Фильм-спектакль СЕЛО СТЕПАНЧИКОВО И ЕГО ОБИТАТЕЛИ
17.20, 1.25 Мировые сокровища культуры
17.35 Звезды мирового фортепианного искусства
18.35 Искусство Германии
19.45 Главная роль
20.05 Сати. Нескучная классика...
20.45 Полиглот
21.30 Ночные летописи Геннадия Доброва
22.15 Тем временем
23.00 После Моей жизни в искусстве
23.55 Профессия кинокритик, или Необходимость современности
0.35 Владимир Набоков. Русские корни
2.35 И. Штраус. Не только вальсы

НТВ
6.00 НТВ утром
8.05 ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Живут же люди! **0+**
10.55 До суда **16+**
12.00 Суд присяжных **16+**
13.25 Суд присяжных. Окончательный вердикт **16+**
14.35 СУПРУГИ 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 Прокурорская проверка **16+**
17.40 Говорим и показываем **16+**
19.30 ПАУТИНА 16+
21.25 ЗАЩИТА КРАСИНА 16+
23.15 Сегодня. Итоги
23.35 РУССКИЙ ДУБЛЬ 16+
1.35 Дикий мир **0+**

ТНТ
7.00, 7.35 Покемоны: Победители Лиги Синно **12+**
7.55 Эй, Арнольд! Ложная тревога. Мировой рекорд **12+**
8.25 ОХОТНИКИ ЗА МОНСТРАМИ 12+
9.00 Про декор **12+**
9.30 Жизнь и приключения робота-подростка **12+**
10.25 Губка Боб Квадратные штаны **12+**
11.20 **ОБЛАСТИ ТЬМЫ 16+**
13.30, 19.30 УНИВЕР 16+
14.00 СЧАСТЛИВЫ ВМЕСТЕ ДАВАЙТЕ СДАЧИ, НЕ ОТХОДЯ ОТ КАССЫ. ЧАСТЬ 1 16+
14.30 Дом-**2.** Lite **16+**
16.25, 17.00 ИНТЕРНЫ 16+
17.30 РЕАЛЬНЫЕ ПАЦАНЫ 16+
18.00 РЕАЛЬНЫЕ ПАЦАНЫ ДРАКА В КАФЕ 16+
18.30 СЧАСТЛИВЫ ВМЕСТЕ ЗАКОН И БЕСПОРЯДОК 16+
19.00 ДЕФФЧОНКИ МЕСТЬ ИЛИ... 16+
20.00 СЧАСТЛИВЫ ВМЕСТЕ БЕЗБРАЧНЫЕ УЗЫ 16+
20.30 ДЕФФЧОНКИ БАРБИ 16+
21.00 **ЭЙС ВЕНТУРА: РОЗЫСК ДОМАШНИХ ЖИВОТНЫХ 12+**
22.35 Комеди Клаб **16+**
23.00 Дом-**2.** Город любви **16+**
0.00 Дом-**2.** После заката **16+**
0.30 **ПРИВЕТ, ДЖУЛИ! 16+**
2.15 ХОР 12+

ТВЦ
6.00 Настроение
8.30 **КИТАЙСКИЙ СЕРВИЗ 6+**
10.20 Анна Самохина. Одиночество королевы 12+
11.10, 15.10 Петровка, **38 16+**
11.30, 14.30, 17.30, 19.50 События
11.50 **БАШМАЧНИК 12+**
13.55 Тайны нашего кино. Служебный роман **12+**
14.50 Город новостей
15.30 Воспитание детенышей. Лоси 6+
16.35 Врачи **12+**
17.50 ДНИ АНГЕЛА 12+
18.45 Право голоса **16+**
20.15 Внезапное наследство 12+
21.05 **ЕКАТЕРИНА ФУРЦЕВА. ЖЕНЩИНА В МУЖСКОЙ ИГРЕ 12+**
22.00 ФУРЦЕВА 16+
0.10 События. **25**-й час
0.45 Капабланка. Шахматный король и его королева 12+
1.35 **ПУАРО АГАТЫ КРИСТИ 12+**

СТС
6.00 Гуфи и его команда **6+**
7.00 Великий Человек-паук **12+**
7.30 Чародейки **12+**
8.00 ПАПИНЫ ДОЧКИ 12+
8.30 СВЕТОФОР 16+
9.00, 9.30, 13.30, 19.00, 23.45, 0.00 6 КАДРОВ 16+
10.30, 17.30, 18.30 ВОРОНИНЫ 16+
12.30 ДАЕШЬ МОЛОДЕЖЬ! 16+
14.00 **ЗНАКОМЬТЕСЬ, ДЖО БЛЭК 16+**
19.20 **Шрэк 12+**
21.00 **ДНЕВНИК ДОКТОРА ЗАЙЦЕВОЙ 16+**
22.00 **БРИЛЛИАНТОВЫЙ ПОЛИЦЕЙСКИЙ 16+**
0.30 Кино в деталях **16+**
1.30 **ВЛЕЧЕНИЕ 18+**

ЯНВ 15 вторник
ытлари кун

3.25 **БОЛЬШЕ, ЧЕМ ИГРА 12+**

ПЕРВЫЙ
5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 23.30, 3.00 Новости
5.05 Доброе утро
9.15, 4.20 Контрольная закупка
9.45 Жить здорово! **12+**
10.55 Модный приговор
12.20 Время обедать!
13.00 Доброго здоровьица! **12+**
14.00 Другие новости
14.25 Понять. Простить **12+**
15.15 Хочу знать
15.50 Дешево и сердито
16.35 Ты не один **16+**
17.05 НЕРАВНЫЙ БРАК 16+
18.50 Давай поженимся! **16+**
19.50 Пусть говорят **16+**
21.00 Время
21.30 МЕТОД ФРЕЙДА 16+
23.50 Городские пижоны. Задиры **16+**
1.00 **МОРСКОЙ ПЕХОТИНЕЦ 16+**
2.40, 3.05 **ДЖЕССИ СТОУН: РЕЗКОЕ ИЗМЕНЕНИЕ 16+**

РОССИЯ 1
5.00 Утро России
9.00 1000 мелочей
9.45 О самом главном
10.30 КУЛАГИН И ПАРТНЕРЫ **12+**
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50 ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ 12+
12.50 Дело Х. Следствие продолжается **12+**
13.50, 16.45, 4.45 Вести. Дежурная часть
14.50 ЕФРОСИНЬЯ. ТАЕЖНАЯ ЛЮБОВЬ
15.45 ТАЙНЫ ИНСТИТУТА БЛАГОРОДНЫХ ДЕВИЦ
17.50 ВКУС ГРАНАТА 12+
20.30 Спокойной ночи, малыши!
20.40 Прямой эфир **12+**
21.30 МАРЬИНА РОЩА 12+
0.15 Дежурный по стране Михаил Жванецкий
1.15 Вести +
1.40 **ИДИ ДОМОЙ 16+**
3.40 **ЧАК-4 16+**

ЧУВАШИЯ
6.07, 6.35 Вести-Чăваш ен
7.07, 7.35 Утро Чувашии
8.07, 8.35 Утро Чувашии
9.00-9.45 Рождественская елка
11.30 Вести-Чăваш ен
14.30 Вести-Чувашия
17.30-17.50 Вести-Чăваш ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

РОССИЯ К
6.30 Евроньюс
10.00 Наблюдатель
11.15 ПЕРРИ МЭЙСОН
12.10 Секретные проекты Космические страсти по Алмазу
12.40 Владимир Набоков. Русские корни
13.30 Малый ледниковый период
14.25, 20.45 Полиглот
15.10 Пятое измерение.
15.40, 19.30, 23.30 Новости культуры
15.50 Ф.М. Достоевский. Фильм-спектакль СЕЛО СТЕПАНЧИКОВО И ЕГО ОБИТАТЕЛИ
17.20 Мировые сокровища культуры
17.35 Звезды мирового фортепианного искусства
18.35 Искусство Германии
19.45 Главная роль
20.05 Власть факта. Всемирная история чая
21.30 Больше, чем любовь
22.15 Игра в бисер
23.00 После Моей жизни в искусстве
23.50 **ХАННЕРЛЬ, СЕСТРА МОЦАРТА**
1.50 А. Рубинштейн. Вальс-каприс

НТВ
6.00 НТВ утром
8.05 ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Евгений Весник. Все не как у людей 12+
11.10, 15.10 Петровка, **38 16+**
11.30, 14.30, 17.30, 19.50 События
11.50 **ДЕСЯТЬ НЕГРИТЯТ 12+**
14.50 Город новостей
15.30 Воспитание детенышей. Медвежата 6+
16.35 Врачи **12+**
17.50 ДНИ АНГЕЛА 12+
18.45 Право голоса **16+**
20.15 Кровавый спорт 16+
22.00 ФУРЦЕВА 16+
0.05 События. **25**-й час
0.40 Линия защиты **16+**
1.15 Знахарь XXI века 12+

СТС
6.00 Гуфи и его команда **6+**
7.00 Великий Человек-паук **12+**
7.30 Чародейки **12+**
8.00 ПАПИНЫ ДОЧКИ 12+
8.30 СВЕТОФОР 16+
9.00, 13.10, 13.30, 16.45, 19.00, 0.00, 0.30 6 КАДРОВ 16+
9.30, 21.00 **ДНЕВНИК ДОКТОРА ЗАЙЦЕВОЙ 16+**
10.30, 17.00, 18.30 ВОРОНИНЫ 16+
11.30 **Шрэк 12+**
14.00 Галилео **0+**
15.00 **БРИЛЛИАНТОВЫЙ ПОЛИЦЕЙСКИЙ 16+**
19.20 **Кунг-фу Панда 6+**
22.00 **ДЕВУШКА МОИХ КОШМАРОВ 16+**

ТВЦ
6.00 Настроение
8.30 **ТРЕМБИТА**
10.20 Евгений Весник. Все не как у людей 12+
11.10, 15.10 Петровка, **38 16+**
11.30, 14.30, 17.30, 19.50 События
11.50 **ДЕСЯТЬ НЕГРИТЯТ 12+**
14.50 Город новостей
15.30 Воспитание детенышей. Медвежата 6+
16.35 Врачи **12+**
17.50 ДНИ АНГЕЛА 12+
18.45 Право голоса **16+**
20.15 Кровавый спорт 16+
22.00 ФУРЦЕВА 16+
0.05 События. **25**-й час
0.40 Линия защиты **16+**
1.15 Знахарь XXI века 12+

ЯНВ 16 среда
юн кун

0.55 СООБЩЕСТВО 16+
1.45 Музыка на СТС **16+**

ПЕРВЫЙ
5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 23.30, 3.00 Новости
5.05 Доброе утро
9.15, 4.05 Контрольная закупка
9.45 Жить здорово! **12+**
10.55 Модный приговор
12.20 Время обедать!
13.00 Доброго здоровьица! **12+**
14.00 Другие новости
14.25 Понять. Простить **12+**
15.15 Хочу знать
15.50 Дешево и сердито
16.35 Ты не один **16+**
17.05 НЕРАВНЫЙ БРАК 16+
18.50 Давай поженимся! **16+**
19.50 Пусть говорят **16+**
21.00 Время
21.30 **АНГЕЛ В СЕРДЦЕ 12+**
23.50 Городские пижоны Гримм **16+**
0.40, 3.05 **ПОДАЛЬШЕ ОТ ТЕБЯ 16+**
3.15 24 ЧАСА 16+

РОССИЯ 1
5.00 Утро России
9.00 1000 мелочей
9.45 О самом главном
10.30 КУЛАГИН И ПАРТНЕРЫ **12+**
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50 ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ 12+
12.50 Дело Х. Следствие продолжается **12+**
13.50, 16.45 Вести. Дежурная часть
14.50 ЕФРОСИНЬЯ. ТАЕЖНАЯ ЛЮБОВЬ
15.45 ТАЙНЫ ИНСТИТУТА БЛАГОРОДНЫХ ДЕВИЦ
17.50 ВКУС ГРАНАТА 12+
20.30 Спокойной ночи, малыши!
20.40 Прямой эфир **12+**
21.30 МАРЬИНА РОЩА 12+
0.15 Исторические хроники. **1988.** Александр Яковлев
1.15 Вести +
1.40 Честный детектив **16+**
2.15 **КОШМАРНЫЙ МЕДОВЫЙ МЕСЯЦ 16+**
4.00 **ЧАК-4 16+**

ЧУВАШИЯ
6.07, 6.35 Вести-Чăваш ен
7.07, 7.35 Утро Чувашии
8.07, 8.35 Утро Чувашии
11.30 Вести-Чăваш ен
14.30 Вести-Чувашия
17.30-17.50 Вести-Чăваш ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

НТВ
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Чудо техники **12+**
10.55 До суда **16+**
12.00 Суд присяжных **16+**
13.25 Суд присяжных. Окончательный вердикт **16+**
14.35 СУПРУГИ 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 Прокурорская проверка **16+**
17.40 Говорим и показываем **16+**
19.30 ПАУТИНА 16+
21.25 ЗАЩИТА КРАСИНА 16+
23.15 Сегодня. Итоги
23.35 РУССКИЙ ДУБЛЬ 16+
1.35 Квартирный вопрос **0+**
2.40 Дикий мир **0+**
3.05 ТЕРМИНАЛ 16+
5.10 ХРАНИТЕЛЬ 16+

ТНТ
Профилактика
14.30 Дом-**2.** Lite **16+**
16.25, 17.00 ИНТЕРНЫ 16+
17.30 РЕАЛЬНЫЕ ПАЦАНЫ ДЕТЕКТИВ 16+
18.00 РЕАЛЬНЫЕ ПАЦАНЫ НАУМОВ КОВЧЕГ 16+
18.30 СЧАСТЛИВЫ ВМЕСТЕ УКУСИ МЕНЯ НЕЖНО 16+
19.00 ДЕФФЧОНКИ ИРОНИЯ СУДЬБЫ 16+
19.30 УНИВЕР 16+
20.00 СЧАСТЛИВЫ ВМЕСТЕ БУКИН ПРОТИВ БУКИНА 16+
20.30 ДЕФФЧОНКИ ЗВЕЗДА НЕ ЗВОНИТ 16+
21.00 **ТУПОЙ И ЕЩЕ ТУПЕЕ ТУПОГО 16+**
22.40 Комеди Клаб **16+**
23.00 Дом-**2.** Город любви **16+**
0.00 Дом-**2.** После заката **16+**
0.30 **ПОСЛЕДНЯЯ МИМЗИ ВСЕЛЕННОЙ 12+**
2.25 ХОР 12+
3.20 СУМЕРЕЧНАЯ ЗОНА ЧИСТИЛЬЩИК БАССЕЙНОВ. МОЙ ДРУГ ЭЗОТМСТИТЕЛЬ 16+
4.10 СуперИнтуиция **16+**
5.10 Необъяснимо, но факт Призраки замков **16+**
6.10 САША + МАША 16+

РОССИЯ К
Канал начинает вещание с **10.0**
10.00 Наблюдатель
11.15, 1.55 ПЕРРИ МЭЙСОН
12.10 Секретные проекты Ракетный миф
12.40 Профессия кинокритик, или Необходимость современности
13.20 Балахонский манер
13.30 Малый ледниковый период
14.05, 1.40 Мировые сокровища культуры
14.25, 20.45 Полиглот
15.10 Красуйся, град Петров!
15.40, 19.30, 23.30 Новости культуры
15.50 Телеспектакль ОБЫКНОВЕННАЯ ЖИЗНЬ
16.50 Волею судьбы. Евгений Чазов
17.35 Звёзды мирового фортепианного искусства
18.35 Искусство Германии
19.45 Главная роль
20.05 Абсолютный слух
21.30 Хамдамов на видео
22.15 Магия кино
23.00 После Моей жизни в искусстве
23.50 **МОЙ ДОМ ПОЛОН ЗЕРКАЛ**
2.45 Ф. Шопен. Баллада №**1.** Исполняет Ф. Кемпф

НТВ
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Чудо техники **12+**
10.55 До суда **16+**
12.00 Суд присяжных **16+**
13.25 Суд присяжных. Окончательный вердикт **16+**
14.35 СУПРУГИ 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 Прокурорская проверка **16+**
17.40 Говорим и показываем **16+**
19.30 ПАУТИНА 16+
21.25 ЗАЩИТА КРАСИНА 16+
23.15 Сегодня. Итоги
23.35 РУССКИЙ ДУБЛЬ 16+
1.35 Квартирный вопрос **0+**
2.40 Дикий мир **0+**
3.05 ТЕРМИНАЛ 16+
5.10 ХРАНИТЕЛЬ 16+

ТНТ
Профилактика
14.30 Дом-**2.** Lite **16+**
16.25, 17.00 ИНТЕРНЫ 16+
17.30 РЕАЛЬНЫЕ ПАЦАНЫ ДЕТЕКТИВ 16+
18.00 РЕАЛЬНЫЕ ПАЦАНЫ НАУМОВ КОВЧЕГ 16+
18.30 СЧАСТЛИВЫ ВМЕСТЕ УКУСИ МЕНЯ НЕЖНО 16+
19.00 ДЕФФЧОНКИ ИРОНИЯ СУДЬБЫ 16+
19.30 УНИВЕР 16+
20.00 СЧАСТЛИВЫ ВМЕСТЕ БУКИН ПРОТИВ БУКИНА 16+
20.30 ДЕФФЧОНКИ ЗВЕЗДА НЕ ЗВОНИТ 16+
21.00 **ТУПОЙ И ЕЩЕ ТУПЕЕ ТУПОГО 16+**
22.40 Комеди Клаб **16+**
23.00 Дом-**2.** Город любви **16+**
0.00 Дом-**2.** После заката **16+**
0.30 **ПОСЛЕДНЯЯ МИМЗИ ВСЕЛЕННОЙ 12+**
2.25 ХОР 12+
3.20 СУМЕРЕЧНАЯ ЗОНА ЧИСТИЛЬЩИК БАССЕЙНОВ. МОЙ ДРУГ ЭЗОТМСТИТЕЛЬ 16+
4.10 СуперИнтуиция **16+**
5.10 Необъяснимо, но факт Призраки замков **16+**
6.10 САША + МАША 16+

ТВЦ
Профилактика
12.00 **ЗАДАЧА С ТРЕМЯ НЕИЗВЕСТНЫМИ 6+**
14.30, 17.30, 19.50 События
14.50 Город новостей
15.10 Петровка, **38 16+**
15.30 Воспитание детенышей. Гиены 6+
16.35 Врачи **12+**
17.50 ДНИ АНГЕЛА 12+
18.45 Право голоса **16+**
20.15 Доказательства вины. Один в поле воин **16+**
21.05 Без обмана. Птичьи права **16+**
22.00 ФУРЦЕВА 16+
0.05 События. **25**-й час
0.40 **ВОЙНА ФОЙЛА 16+**
2.45 **КИТАЙСКИЙ СЕРВИЗ 6+**

СТС
6.00 Гуфи и его команда **6+**
7.00 Великий Человек-паук **12+**
7.30 Чародейки **12+**
8.00 ПАПИНЫ ДОЧКИ 12+
8.30 СВЕТОФОР 16+
9.00, 13.10, 13.30, 19.00, 23.40, 0.00 6 КАДРОВ 16+
9.30, 21.00 **ДНЕВНИК ДОКТОРА ЗАЙЦЕВОЙ 16+**
10.30, 17.00, 18.30 ВОРОНИНЫ 16+
11.30 **Кунг-фу Панда 6+**
14.00 Галилео **0+**
15.00 **ДЕВУШКА МОИХ КОШМАРОВ 16+**
19.25 **Мадагаскар 6+**
22.00 **МЕДАЛЬОН 16+**
0.30 **ЖИЗНЬ ПО ДЖЕЙН ОСТИН 16+**
2.30 **ПРЕСТУПНИК 16+**
4.25 СООБЩЕСТВО 16+

ЯНВ 17 четверг
кĕçнерни кун

ПЕРВЫЙ
5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 23.30, 3.00 Новости
5.05 Доброе утро
9.15 Контрольная закупка
9.45 Жить здорово! **12+**
10.55 Модный приговор
12.20 Время обедать!
13.00 Доброго здоровьица! **12+**
14.00 Другие новости
14.25 Понять. Простить **12+**
15.15 Хочу знать
15.50 Дешево и сердито
16.35 Ты не один **16+**
17.05 НЕРАВНЫЙ БРАК 16+
18.50 Давай поженимся! **16+**
19.50 Пусть говорят **16+**
21.00 Время
21.30 **АНГЕЛ В СЕРДЦЕ 12+**
23.50 На ночь глядя **12+**
0.50 **СУПЕРПЕРЦЫ 16+**

РОССИЯ 1
5.00 Утро России
9.00 1000 мелочей
9.45 О самом главном
10.30 КУЛАГИН И ПАРТНЕРЫ **12+**
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести

ЧУВАШИЯ
6.07, 6.35 Вести-Чăваш ен
7.07, 7.35 Утро Чувашии
8.07, 8.35 Утро Чувашии
9.00 Рождество в Аликовском районе
9.15-9.45 Секреты здоровья и красоты
11.30 Вести-Чăваш ен
14.30 Вести-Чувашия
17.30-17.50 Вести-Чăваш ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

РОССИЯ К
6.30 Евроньюс
10.00 Наблюдатель
11.15, 1.55 ПЕРРИ МЭЙСОН
12.10 Секретные проекты Подземный крейсер
12.40 Хамдамов на видео
13.15, 17.20, 22.00, 1.40 Мировые сокровища культуры
13.30 Атлантида была здесь
14.25, 20.45 Полиглот
15.10 Письма из провинции
15.40, 19.30, 23.30 Новости культуры
15.50 О. Уайльд. Телеспектакль КАК ВАЖНО БЫТЬ СЕРЬЕЗНЫМ
17.35 Звезды мирового фортепианного искусства
18.25 Жюль Верн
18.35 Золотая спираль
19.45 Главная роль
20.05 Черные дыры. Белые пятна
21.30 Гении и злодеи. Отто Ган
22.15 Культурная революция
23.00 После Моей жизни в искусстве
23.50 **МОЙ ДОМ ПОЛОН ЗЕРКАЛ**
2.45 Ян Сибелиус. Оркестровые пьесы

НТВ
6.00 НТВ утром
8.05 ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня

ТВ Эрне

Т ТЕЛЕСЕРИАЛ
Х ХУДОЖЕСТВЕННЫЙ ФИЛЬМ
Д ДОКУМЕНТАЛЬНЫЙ ФИЛЬМ
М Мультфильм

пятница ЯНВ 18
эрне кун

10.20 Медицинские тайны **16+**
10.55 До суда **16+**
12.00 Суд присяжных **16+**
13.25 Суд присяжных. Окончательный вердикт **16+**
14.35 Т СУПРУГИ 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 Прокурорская проверка **16+**
17.40 Говорим и показываем **16+**
19.30 Т ПАУТИНА 16+
21.25 Т ЗАЩИТА КРАСИНА 16+
23.15 Сегодня. Итоги
23.35 Т РУССКИЙ ДУБЛЬ 16+
1.35 Дачный ответ **0+**

ТНТ
7.00, 7.35 М Покемоны: Победители Лиги Синно **12+**
7.55 М Эй, Арнольд! **12+**
8.25 Т СЧАСТЛИВЫ ВМЕСТЕ ДАВАЙТЕ СДАЧИ, НЕ ОТХОДЯ ОТ КАССЫ. ЧАСТЬ 2 16+
9.00 М **Веселые мелодии 12+**
9.25 М Кунг-фу Панда: Удивительные легенды Липкое дело **12+**
9.55 М Кунг-фу Панда: Удивительные легенды Принцесса и По **12+**
10.20 М Губка Боб Квадратные штаны **12+**
11.15 Т ЖЕНСКАЯ ЛИГА: ПАРНИ, ДЕНЬГИ И ЛЮБОВЬ 16+
11.40 Т ТУПОЙ И ЕЩЕ ТУПЕЕ ТУПОГО 16+
13.30, 19.30 Т УНИВЕР 16+
14.00 Т СЧАСТЛИВЫ ВМЕСТЕ МОЯ УЖАСНАЯ НЯНЯ 16+
14.30 Дом-**2.** Lite **16+**
16.25, 17.00 Т ИНТЕРНЫ 16+
17.30 Т РЕАЛЬНЫЕ ПАЦАНЫ НАУМОВ КОВЧЕГ 16+
18.00 Т РЕАЛЬНЫЕ ПАЦАНЫ ДМБ 11 16+
18.30 Т СЧАСТЛИВЫ ВМЕСТЕ БУКИН ПРОТИВ БУКИНА 16+
19.00 Т ДЕФФЧОНКИ ЗВЕЗДА НЕ ЗВОНИТ 16+
20.00 Т СЧАСТЛИВЫ ВМЕСТЕ ГЕНОСЕКСУАЛИСТ 16+
20.30 Т ДЕФФЧОНКИ ЧЕЛЮСТИ 16+
21.00 Х **ОСТИН ПАУЭРС: ГОЛДМЕМБЕР 16+**
23.00 Дом-**2.** Город любви **16+**
0.00 Дом-**2.** После заката **16+**
0.30 Т МГНОВЕНИЯ НЬЮ-ЙОРКА 12+
2.15 Т ХОР 12+
3.10 Т СУМЕРЕЧНАЯ ЗОНА МОНТЕР 16+

ТВЦ
6.00 Настроение
8.30 Х **НЕПРИДУМАННАЯ ИСТОРИЯ 12+**
10.15, 15.10 Петровка, **38 16+**
10.30, 11.50 Х **САМАЯ КРАСИВАЯ 12+**
11.30, 14.30, 17.30, 19.50 События
14.50 Город новостей
15.30 Т Воспитание детенышей. Гориллы 6+
16.35 Врачи **12+**
17.50 Т ДНИ АНГЕЛА 12+
18.45 Право голоса **16+**
20.15 Д Тайны двойников 12+
22.00 Т ФУРЦЕВА 16+
0.00 События. **25**-й час
0.35 Х **ТУРНИР НА ВЫЖИВАНИЕ 16+**
2.25 Х **ТРОИХ НАДО УБРАТЬ 16+**

СТС
6.00 М Гуфи и его команда **6+**
7.00 М Скуби Ду. Корпорация Тайна **6+**
7.30 М Чародейки **12+**
8.00 Т ПАПИНЫ ДОЧКИ 12+
8.30 Т СВЕТОФОР 16+
9.00, 13.05, 13.30, 16.40, 19.00, 23.50, 0.00 Т 6 КАДРОВ 16+
9.30, 21.00 Х **ДНЕВНИК ДОКТОРА ЗАЙЦЕВОЙ 16+**
10.30, 17.00, 18.30 Т ВОРОНИНЫ 16+
11.30 М **Мадагаскар 6+**
14.00 Галилео **0+**
14.20 Х **МЕДАЛЬОН 16+**
19.25 М **Мадагаскар-2. Побег из Африки 6+**
22.00 Х **СМОКИНГ 12+**
0.30 Х **ИЛЛЮЗИЯ ДОПРОСА 18+**
2.30 Х **ПРИЗРАКИ 16+**

ПЕРВЫЙ
5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
5.05 Доброе утро
9.15 Контрольная закупка
9.45 Жить здорово! **12+**
10.55 Модный приговор
12.20 Время обедать!
13.00 Доброго здоровьица! **12+**
14.00 Другие новости
14.25 Понять. Простить **12+**
15.15 Хочу знать
15.50 Дешево и сердито
16.35 Ты не один **16+**
17.05 Жди меня
18.50 Давай поженимся! **16+**
19.50 Поле чудес
21.00 Время
21.30 Две звезды
23.30 Х **ПЛЯЖ 16+**
1.40 Х **ВЕРДИКТ 16+**
4.10 Х **ДЕНЬ СМЕХА 16+**

РОССИЯ 1
5.00 Утро России
8.55 Мусульмане
9.05 1000 мелочей
9.45 О самом главном
10.30 КУЛАГИН И ПАРТНЕРЫ **12+**
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50 Т ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ 12+
12.50 Дело Х. Следствие продолжается **12+**
13.50, 16.45, 4.40 Вести. Дежурная часть
14.50 Т ЕФРОСИНЬЯ. ТАЕЖНАЯ ЛЮБОВЬ
15.45 Т ТАЙНЫ ИНСТИТУТА БЛАГОРОДНЫХ ДЕВИЦ
17.50 Т ВКУС ГРАНАТА 12+
20.30 Спокойной ночи, малыши!
20.40 Прямой эфир **12+**
21.30 Т МАРЬИНА РОЩА 12+
0.15 Исторические хроники. **1990.** Распад
1.15 Х **ЧЕЛОВЕК, КОТОРЫЙ ЗНАЛ ВСЕ 12+**
3.25 Х **ЧАК-4 16+**

ЧУВАШИЯ
6.07, 6.35 Вести-Чăваш ен
7.07, 7.35 Утро Чувашии
8.07, 8.35 Утро Чувашии
9.05-9.45 Телеюрă
11.30 Вести-ПФО
14.30 Вести-Чувашия
17.30-17.50 Вести-Чăваш ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

РОССИЯ К
6.30 Евроньюс
10.00, 15.40, 19.30, 23.30 Новости культуры
10.20 Х **Я ЛЮБЛЮ**
11.50 Провинциальные музеи Русский Манчестер, или Город невест
12.20 Секретные проекты. Бомба-невидимка
12.45 Портрет в розовом платье
13.30 Д Золотая спираль
14.25 Полиглот
15.10 Личное время
15.50 Телеспектакль ЛИКА
17.20 Царская ложа. Мариинский театр
18.00 Игры классиков. Григорий Соколов
19.00 Д Блокада. Пятая попытка
19.45 Х **ЛЕНИНГРАДСКАЯ СИМФОНИЯ**
21.20, 1.55 Искатели. Затерянный город шелкового пути
22.05 Линия жизни
23.00 После Моей жизни в искусстве
23.50 Х **СТРАННАЯ ДРАМА**
1.40 М **История одного города**
2.40 Д Мировые сокровища культуры

НТВ
6.00 НТВ утром
8.05 Т ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Спасатели **16+**
10.55 До суда **16+**
12.00 Суд присяжных **16+**
13.25 Суд присяжных. Окончательный вердикт **16+**
14.35 Т СУПРУГИ 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 Прокурорская проверка **16+**
17.40 Говорим и показываем **16+**
19.30 Т ПАУТИНА 16+
23.25 Т РУССКИЙ ДУБЛЬ 16+
1.25 Х **ЭКСПРЕСС 16+**
3.50 Т ТЕРМИНАЛ 16+

ТНТ
7.00, 7.35 М Покемоны: Победители Лиги Синно **12+**
7.55 М Эй, Арнольд! **12+**
8.25 Т СЧАСТЛИВЫ ВМЕСТЕ МОЯ УЖАСНАЯ НЯНЯ 16+
9.00 М **Веселые мелодии 12+**
9.25 М Кунг-фу Панда: Удивительные легенды Цепная реакция **12+**
